**Паллă чăваш сăвăçи, прозаик, куçаруçă, литература тĕпчевçи, фольклорист Илле Тукташ çуралнăранпа кăçал 110 çул çитрĕ**



# Ăрусене вăл пырĕ вăй парса...

Вăл çырнă «Тăван çĕршыв» сăвва пĕлмен чăваш çук та пулĕ çĕр çинче.

*Çурхи тĕнче вăраннă чух,*
*Хаваслă кун шăраннă чух,*
*Чун савăнать, чĕре сикет,*
*Çĕршывăм çинчен юрлас килет.*

*Тăван çĕршыв,*
*Тăван çĕршыв,*
*Асран кайми*
*Юратнă çĕршыв.*

Çапла вара «Тăван çĕршыв» юрă çыравçă пултарулăхĕнчи чи пысăк çитĕнӳ пулса тăчĕ. Гимнăн кĕввипе сăмахĕсем чăваш халăх юррине çывăх, çав вăхăтрах унта паянхи самана таппи уççăн илтĕнет, унăн савăнăçлă та çĕкленӳллĕ сасси пирĕн чĕресенче мăнаçлăх çуратать, Чăваш Ен çутă малашлăхĕшĕн чунтан парăнса ĕçлеме хавхалантарать.

***Пуçласа Илле Тукташ сăввисемпе Герман Лебедев кĕвĕленĕ «Тăван çĕршыв» юрă 1945 çулта Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Петр Осиповăн «Тăван çĕршыв» пьеси тăрăх лартнă спектакльте янăранă. Куракансем кĕвве ура çине тăрсах итленĕ, вăл кашни çын чунне пырса тивнĕ, телейлĕ те мирлĕ пурнăç символĕ пулса тăнă. Ахальтен мар 1997 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче «Тăван çĕршыв» юрра «Чăваш Республикин Патшалăх символĕсем çинчен» калакан саккунпа килĕшӳллĕн патшалăх гимнĕ туса хунă.***

Патшалăх гимнĕн тексчĕ сăнарсен виçĕ ушкăнне пĕрлештерет: çут çанталăк чĕрĕлни /тăвансем, атте-анне, ача-пăча – çемье пĕрлĕхĕ/, чăваш тĕнчинчи пĕтĕм халăх туслăхĕпе килĕшĕвĕ. Чăваш Уявĕ çавăнпа яланах çак сăваплă юрăран пуçланать.

Сăвă 1927 çулта «Çамрăк хресчен» хаçатра чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче пичетленсе тухнă. Ун чухне поэт çирĕмре кăна пулнă. Сăвăра Тукташ çĕнĕ самана халăха ирĕк пани, ăна пĕрлештерни çинчен хумханса çырать.

***Илле Тукташ чăваш литературин тĕнчине «Курасса эп шутламанччĕ» сăвăпа килсе кĕнĕ. Литературăри хушаматне вăл хăйĕн тăван ялĕн ятĕнчен илет – Тукташ.***

Çамрăк çыравçă хай-

лавĕсенче тăван тавралăха урăхла курма, унăн илемлĕхне туйма пĕлни сисĕнет, сăмаха тӳррĕн калани палăрать. Ĕç çынна хавхалантарине, пурнăçа илем кӳртнине кăтартса 1927 çулта вăл çапла çырнă:

*Эпĕ те сирĕнпе*
*Юрă пуçлам-и,*
*Пурнăçри телейпе*
*Хавхаланам-и?*
*Ир тăрса, пит çуса,*
*Хире тухам-и,*
*Сар ыраш анине*
*Вырма пуçлам-и?*
*Ирпеле, сывлăмла,*
*Пилĕк авам-и,*
*Вăй хушма кăнтăрла*
*Выртса канам-и?*
*...Савăк кун çитнипе*
*Хавасланам-и,*
*Хам ĕçпе халăха*
*Савăнтарам-и?...*
*... Хăватлан, чечеклен,*
*Çĕнĕ пурнăç!*
*Эх, ĕçлес, эх, ĕçлес, –*
*Ĕçре савăнăç!*

/«Эпĕ те сирĕнпе», 1927/

1931 çулта Илле Тукташ çырнă «Вăкăр çырми» повеçе вулакан питĕ ăшшăн йышăннă. Вăл «Трактăр»,чăваш пролетари писателĕсен ассоциацийĕн литература, критика, политика альманахĕн 2-мĕш кĕнекинче кун çути курнă. Унта вăл колхозсем тăвас анлă юхăм тапранса кайнине сăнать. Часах хайлав чăваш классики шутне кĕнĕ. Колхозлă ял пурнăçĕ çинчен калакан произведенисем – сăвăсем, калавсем, очерксем – И. Тукташ каярах та сахал мар çырнă. Вĕсенчен паллăраххисем: «Çĕр хуçисем» /1954, 1982/, «Сăвăсемпе юрăсем» /1958/.

Çыравçăн пĕрремĕш сăвăсемпе поэмăсен уйрăм кĕнеки 1932 çулта «Октябрь çилĕ» ятпа Вăтам Атăл тăрăхĕн патшалăх издательствинче /Самара/ кун çути курнă. Кĕнекене кĕнĕ сăвăсем вулакана романтикăлăхпа, çĕкленӳлĕхпе, хăйевĕрлĕхпе тыткăнлаççĕ, вĕсенче çĕнĕ пурнăç сăнланать, хавхаланулла туйăм палăрать.

Пултарулла лирик халăх юррисем майлă чылай сăвă çырнă. Сăввисенче халăх кун-çулне, шухăш-кăмăлне, кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе уявĕ-сăйлавне, савăнăçĕпе хуйхи-суйхине йĕрлет. Сăвăç Тăван çĕршыва, тăван тавралăхпа унăн илемне мухтаса юрлани уççăнах илтĕнет.

Вăл çăмăл тата çепĕç юрламалла чĕлхепе çырнине палăртса чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер «Чăваш кĕвви çĕр хĕрĕх сумлă» статьяра акă мĕнле калать: «Туйăм тасалăхĕ, ытарма çук çепĕç чĕлхе, яланах çĕнĕ сăнарсем патне туртăнни, çав сăнарлăх тĕнчине ансат мелсемпех кĕрсе кайма меслет çитерни поэт пултарулăхĕнче ятарлăн тĕпчемесĕрех куç умне тухать... Поэт вĕçĕмсĕр шыравра, вăл çын хывнă сукмакпа утмасть, литературăра çĕнĕ сăмахпа, çĕнĕ сăнарпа хăйне çул хывать. Çакна эпир Герман Лебедев кĕвĕленĕ «Сар каччă», Аристарх Орлов-Шуçăм çырнă «Хĕл илемĕ»,«Кĕтнĕ хăна юрри», Василий Воробьев юрă валли суйласа илнĕ «Çурхи хĕвел», «Шурă кăвакарчăн», Григорий Хирбю ăсталанă «Кам-ши, кам-ши?», «Ĕç юрри» тата ытти нумай тĕслĕхре те уççăнах куратпăр...» /Хыпар, 1997, 2, çурла/.

***Илле Тукташăн кашни сăввиех вулакана тыткăнланă. 1930 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче Нестер Янкаспа тата Уйăп Мишшипе пĕрле Илле Тукташ сăввисен пуххине пичетлесе кăларнă. Вулакан пултаруллă çамрăк çыравçа çакăнтан асăрханă, кашни çĕнĕ хайлавĕ пичетленсе тухмассерен Тукташ чапĕ халăхра ӳссех пынă.***

**ЛЕБЕДЕВ Герман Степанович (1913-1980)**



**Семёнов (ТУКТАШ) Илья Семёнович (1907-1957)**





## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ГИМНĔ

Кĕвви ***Г. Лебедевăн*** Сăвви ***И. Тукташăн***

Çурхи тĕнче вăраннă чух,
Хаваслă кун шăраннă чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Çĕршывăм çинчен юрлас килет.

*Хушса юрламалли:*

Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Асран кайми
Юратнă çĕршыв.
Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Мухтав сана,
Çуралнă çĕршыв!

Яшсем-хĕрсем вылянă чух,
Атте-анне ăс панă чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та нумай пурнас килет.

*Хушса юрламалли.*

Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух,
Чăваш тĕнчи çĕкленнĕ чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та хастар пулас килет.

*Хушса юрламалли.*

## ГИМН ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Музыка ***Г. Лебедева*** Стихи ***И. Тукташа***

Когда весны высокий свод
Лучи живые щедро льет, —
На добрый лад судьбу верша,
О крае родном поет душа.

*Припев:*

Поклон тебе,
О Родина,
Красавица
На все времена.
Поклон тебе,
О Родина,
Да славится
Родная страна!

Отцам на смену выйдя в путь,
Ты, юность, им опорой будь.
На добрый лад судьбу верша,
О жизни большой поет душа.

*Припев.*

Народ народу — друг и брат,
Отныне и чуваш крылат,
На добрый лад судьбу верша,
О силе людской поет душа.

*Припев.*



***Роза СТЕПАНОВА**, чăваш эстрада юрăçи:*

*– И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ вăхăтрах Аслă Пăлхар патшалăхĕ, унăн тĕп хули Фанагори çинчен илтнĕччĕ. Çав вырăнсене çитсе курас ĕмĕт пысăкчĕ. Ĕмĕтленни пурнăçланчĕ – 2017 çулта Фанагорире пултăмăр, Азов тинĕсĕнче шыва кĕтĕмĕр.*

*Севастополе те çитсе куртăмăр. Унти чăваш-ентешĕмĕрсемпе паллашрăмăр, туслашрăмăр. Хура тинĕс хумĕсем çинче ярăннине тата епле-ха манăн!*

*Килес çул, сăмах май, Беларуçри Гродно хулинче халăхсен туслăхĕн фестивалĕ иртет. Унта мана та, чăваш пики-юрăçне, йыхравларĕç. Çавăнпа малашлăх тĕллевĕсем çутă та пысăк манăн.*

Унăн «Шур Атăлта акăш», «Шурă кăвакарчăн», «Сарă хĕр», «Тăван çĕршыв», «Ай, маттур, пит маттур», «Чаплă ĕмĕр çыннисем» тата ытти юррисем халăхра анлăн саралнă, мĕншĕн тесен вĕсем ĕç çыннин шухăш-ĕмĕчĕсемпе тата кăмăл туртăмĕпе пĕр кĕвĕллĕ пулнă.

**_Тукташ – чăваш литературинче халăх юррисем майлă юрăсем çырнипе паларнă поэт. Григорий Хирбю, Герман Лебедев, Аристарх Орлов-Шуçăм, Филипп Лукин, Геннадий Воробьев, Анисим Асламас тата чылай чăваш композиторĕ Илле Тукташ çырнă сăвăсем тăрăх юрăсем кĕвĕленĕ._**

1942 çулта поэтăн «Шурă кăвакарчăн» юрри хăрушă вăрçă хирĕнче янăрать, мĕн пур совет салтакне тăшмана çапса салатма, çĕршыва фашист эшкерĕнчен тасатма хавхалантарать. Çак юрра юрланине паян та интернетра тупса итлеме пулать. Юрлаканĕ Николай Гордеев.

Тукташ-прозаик вулакансене тарăн шухăшлă повеçсемпе калавсем, тĕрлĕ очерк парнелет: «Вăкăр çырми», «Тĕпел кукринче», «Кĕрхи каç», «Пурнăç пуçламăшĕ», «Шурă роза», «Чĕре калаçать» тата ытти хайлавне вăл чăн-чăн поэт чунĕпе хавхаланса çырать. Унăн «Кĕске калавĕсем» вара сăвă пекех вуланаççĕ:

*Тата ăçта пур-ши кун пек тивлетлĕ кĕтес? Тата ăçта тупма пулать-ши кун пек çап-çут сенкер тӳпе? Тата ăçта курма пулать-ши кунти пек пин-пин хĕлхемпе çиçсе тăракан хĕвеле? Çуркунне, çуркунне! Пурнăçпа тараватлăх илсе çитертĕн эс тăшманран тасалнă кашни çурт умнех!*

* * *

*Хĕлĕхленчĕç сĕтлĕ-çуллă çут çанталăк кунĕсем. Çурхи хĕвел юхтарчĕ ирĕклĕ çĕршывăмăр çине хăйĕн кĕввине. Чĕрĕ хунавсем кăларса, каллех пурнăç çĕкленчĕ çăлăнăçне тупнă ăшă кăнтăрта.*

* * *

*Уйăх тухрĕ хураллама каçăн шăплăхне. Тӳпери хур кайăк çулĕ тăрăх чупса кайрĕç ылтăн-кĕмĕл çăлтăрсем.*

**_Илле Тукташ пултарулăхĕ анлă, нумай енлĕ, вăл поэзипе кăна çырлахса тăмасть._**

*Тĕлĕретчĕ кăнтăр каçĕ, лăпкăн сывласа. Акă халĕ куçне уçрĕ, меллĕн карăнса. Сисеймерĕм те эпĕ шурăм пуçĕ хĕрелме пуçланине. Тул*

*çутăлать иккен. Телейлĕ кун çывхарса килет.*

Мĕн ачаран Илле Тукташ халăх сăмахлăхĕпе кăсăкланнă, халăхăн иксĕлми пуянлăхне – фольклорне – пухас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă. Çыравçă хатĕрленĕ «Чăваш фольклорĕ» ятлă кĕнеке икĕ хутчен пичетленсе тухнă – 1941 тата 1949 çулсенче. Тукташчен чăваш юрри-сăввипе юмах-халапне никам та кирлĕ таран çыхăнтарса-пĕрлештерсе паман, наука кăтартнă пек тĕпчесе тухса хакламан.

«Пултаруллă çын – нумай енĕпе пултаруллă» тесе ахальтен каламан. Илле Тукташ драматургсен ретĕнче те тивĕçлĕ вырăн йышăнма пултарчĕ. Вăл хайланă «Хĕвел чечекĕ» пьесăна 1953 çулта Чăваш драма театрĕнче лартни чăваш культурипе ӳнер тĕнчинче пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăм пулса тăчĕ. Пьесăн тĕп конфликчĕ – ырăпа усал, çутăпа тĕттĕм кĕрешĕвĕ. Ырă ĕмĕт-шухăша Хĕвелпе унăн хĕрĕсем, çĕр-паттăрпа Ту-паттăр пĕтĕçтерсе тăраççĕ пулсан, усала вара Эсреметпе ун тарçисем – Чунилли, Тухатмăш, Чике-старик хур-сухал тата ыттисем калăпласçĕ. Юмах-халапсенчи сăнарсене пьесăра чĕртсе тăратни Тукташ халăх сăмахлăхне яланах асра, чунра тытнине тепĕр хут çирĕплетет.

*И.С. Тукташ – халăхран тухнă поэт. Вăл халăх шухăш-кăмăлне витĕр курса тăнă.*

Çыравçă куçарура та ăнăçлă ĕçленĕ, ăста тăлмач шутланнă. В. Шекспир сонечĕсене, М. Шолоховăн «Лăпкă Дон» романне, М. Горькин «Хĕрпе вилĕм» тата «Кăйкăр çинчен хунă юрă» калавĕсене, В. Лебедев-Кумач, С. Алымов юррисене вырăсларан чăвашла куçарнă. Иван Ивникпе пĕрле куçарнă вырăс эпосне – «Игорь полкĕ çинчен хунă юрра» чăваш ачисем хапăл туса йышăннă, чунтан юратса вулаççĕ.

Тукташ Михаил Шолоховран нумай вĕренет. Вăл вырăс классикне чунтан хисеплени, ырă тĕслĕх вырăнне хуни уççăнах сисĕнет. Шолохов пултарулăхĕ çыравçăна вĕçĕмсĕр хавхалантарать, «Лăпкă Дон» романа чăвашла куçарма та вăл питĕ хăюллăн тытăнать. Тукташăн «Вăкăр çырми» повеçĕ Шолоховăн «Уçнă çерем» романне аса илтерет.

Пултаруллă поэтăмăрăн ĕмĕрĕ кĕске пулнă, Илле Тукташ 1957 çулта çĕре кĕнĕ.

*Хам халăхăн пуласлăхне шанса çеç*<br>
*Çак вĕçленмен юррăмсене хуратăп.*<br>
*Пулас ăру йăхсем кăна ăнланĕç*<br>
*Поэт ма юлнине тăлăх-туратăн...*<br>
*Çитес тĕнче çынни кăна, ман тусăм*<br>
*Пулса, янратĕ çак юрра çĕршывăмра.*<br>
*Хисеплĕ пулĕ манăн сăвă-муза,*<br>
*Анчах эп хам камне ăнланĕç-ши вара?..*<br>
/«Поэтăн юлашки юрри», 1940/

Литературăра сулмаклă йĕр хăварнă çыравçăна республикăра манмаççĕ. Чăвашсен паллă çыравçи, тăван республика Гимнĕн авторĕ И.С. Тукташ çуралса ӳснĕ çурт çине Асăну хăми вырнаçтарнă, тăван ялĕнче музей уçнă. Шупашкарти урама Тукташ ятне панă. Çакăн çинчен И. Владимировăн «Тукташ ялĕнче» /Хыпар, 1997, 17, кăрлач/ статйинче çырса кăтартнă.

Илле Тукташа хайласа чăваш çыравçисем Николай Евстафьев, Александр Галкин сăвăсем çырнă. А. Галкин «Асран тухми поэт» сăввинче /Чăваш Ен, 1996, 10-17 авг./ поэта чысласа çапла çырать:

... «Тăван çĕршыв» юрра хайларĕ,



***Анатолий ДМИТРИЕВ-ЫРЬЯТ, РФ тата ЧР Писательсен союзĕсен пайташĕ, журналист:***

***– 2017 çул маншăн пултарулăх еçĕнче – çĕнĕрен тапма тытăннă ÇĂЛКУÇ. Чунăмпа çур ĕмĕр çамрăкланса 500 яхăн сăвă хайларăм. Питĕ сулмаклă, юратупа гражданла лирика жанрне тĕпе хурса, «ЧĔРЕ ХĔЛĔХĔСЕМ» (250 сăвă) кĕнекене вулакансем патне илсе çитертĕм.***

***«Тăван Атăл» журналпа çĕнĕрен туслашрăм. Унăн икĕ кăларăмĕнче сăввăмсем пичетленчĕç. Черетре – Валентин Урташ кун-çулĕпе çыхăннă «Вутра çунман уртăш» повеçĕн пĕр уйрăм сыпăкĕ. Юратнă журналăм та çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнăн туйăнать, çамрăкланса та тĕшшипе пуянланса пырать.***

Чăваш çĕрне мухтарĕ чунтанах.
Çак юрă халь –
Чăваш çĕршывĕн Гимнĕ,
Янрать вăл ирсерен чуна уçса.
Ун ĕмĕрĕ пин-пин çула та çитĕ,
Ăрусене вăл пырĕ вăй парса.
Эппин, ИллеТукташ
пурнать паян та,
Малашлăхра та пурнĕ чиперех.
Мухтавлă йĕр хыван поэт нихçан та
Сÿнмест, хĕвел пек çиçĕ ĕмĕрех!»

***Тукташа лайăх пĕлнĕ çынсем пурте тенĕ пек унăн кулăш туйăмĕ çивĕч пулнине палăртнă. Йывăр чирне пăхмасăрах Илья Семенович юптарма, култарма, тăрăхлама питĕ юратнă.***

Çак сăвва Александр Галкин поэт И.С.Тукташ çуралса ÿснĕ çурт çине Асăну хăми вырнаçтарнă чухне вуланă.

Илле Тукташăн пуян та нумай енлĕ эткерĕ чăваш литературин, культурипе ÿнерĕн уйрăлми пайĕ пулса тăчĕ. Чăваш Республикин Наци библиотекин фондĕнче Илле Тукташăн кашни пичетленсе тухнă кĕнеки, сăвви-юрри упранать. Унăн ĕçĕ-хĕлне тĕпчесе çырнă статьясене пухса 1957 çулта Чăваш Республикин М. Горький ячĕллĕ библиотека /халĕ Наци библиотеки/, поэт 50 çул тултарнă тĕле, «И.С. Тукташ» ятлă памятка хатĕрленĕччĕ. Вăл библиографиленĕ материалсенчен пĕрремĕш шутланать. Унтанах поэт пурнăçĕпе пултарулăхне халалланă уйрăм тĕпчевсем тухман. Кĕнекесемпе хаçат-журналсенче, сборниксенче пичетленсе тухнă статьясем чылай, çапах та çителĕклĕ тесе калама çук. Тĕпчевçĕсем И. Тукташăн нумай енлĕ пултарулăхне малалла та анлăн тата туллин тĕпчессе шанас килет.

Илле Тукташ хайлавĕсем кивелмен, вулакансемшĕн паян та питĕ кăсăклă, ахальтен мар унăн пултарулăхне вăтам тата аслă вĕренÿ шкулĕсенче вĕрентеççĕ.

**Галина СОЛОВЬЕВА,**
**Чăваш Республикин Наци библиотекин**
**«Чăваш кĕнеки» центрĕн ертÿçи.**